освободиться от фольклорной условности, творческой наивности в создании художественного образа» [2, с. 148].

Литературные связи говорят о близости художественно-эстетических вкусов народов Поволжья. Сравнительно-сопоставительное литературоведение, выявляя историко-генетические связи, влияния и заимствования, прослеживая механизмы их вхождения в межлитературные сообщества позволяет определить национальную идентичность литературы отдельного этноса.

*Литература*


1. Васин, К.К. Творческие взаимосвязи чувашской и марийской литератур // Чувашский язык, литература и фольклор: Вып. 1. ЧНИИ. – Чебоксары, 1972.

2. Владимиров, Е.В. Межнациональные связи чувашской литературы. – Чебоксары, 1970.

3. Зинченко, В.Г. и др. Методы изучения литературы: Системный подход: учеб. пос. – М.: Флинта: Наука, 2002.

4. Иванов, И.С. О некоторых чертах общности поэтики песен мари и чувашей // Чувашский язык, литература и фольклор: Вып. 1, ЧНИИ. – Чебоксары, 1972.

5. Кудрявцева, Р.А. Субъектная организация юмористических рассказов И. Тхти и М. Шкетана // Вестник Чувашского университета: гуманитарные науки. – 2006. – № 6.

6. Молотова, Т.Л. Марийский народный костюм. – Йошкар-Ола: Мар. кн. изд-во, 1992.

7. Родионов, В.Г. Особенности истории литератур народов Урало-Поволжья (до 30-х гг. XX в.) // М.П. Петров и литературный процесс XX века: материалы Международ. науч. конф., 1—2 ноября 2005 / УдмГУ. – Ижевск, 2006.



*И.В. Софронова*

*Чувашский государственный университет,*

*г. Чебоксары*


## Хв. Уярӑн «Ӑҫта эс, тинӗс?» тата Х. Муракамин «Кафка на пляже. Новый мир» хайлавӗсен танлаштарулӑ тишкерӗвӗ

Икӗ халӑхӑн литературинче пӗр пеклӗхсем пуласси тӗрлӗ пулӑмсенчен килеҫҫӗ. Тӗп сӑлтавсем шутне тӗпчевҫӗсем халӑхсен генетика пӗрлӗхне, истори тапхӑрӗсенче пӗр пӗрипе тачӑ хутшӑнма пултарнине тата типологилле пӗрлӗхсене кӗртеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех, литературӑри тӳркилӳсен сӑлтавне ҫыравҫӑсен пултарулӑхӗпе те ҫыхӑнтарма пулать.

Вёсем пĕр тапхăрта пурăнни, пĕр евĕр литература шкулĕпе е юхăмĕпе кăсăкланни, пĕр тĕне ĕненни те пĕлтерĕшлĕ пулма пултараççĕ.

Япшун тата чăваш халăхĕсен культури, тĕнчекурăмĕ, тĕн ĕненĕвĕсем пĕр пĕринчен аякра тăраççĕ теме çук. Çĕм авал пĕр тăрăхра пурăнни, çут çанталăка сума суни çак пĕрпеклĕхсене сăлтавласа тăраççĕ. С. Убаси, А. Хусанкай тата ытти тĕпчевçĕсем чăвашăн тĕнчекурăмĕнче буддизм тĕнĕн, япшун культурин витĕмĕ пуррине хăйсен ĕçĕсенче пĕрре мар ĕнентерме пултарчĕç.

Таплаштаруллă тишкерӳ валли суйласа илнĕ авторсен çырас туртăмĕнче, шăпинче, пурнăç йĕркинче те тӳр килӳсем сахал мар. Япшун авторĕ Х. Мураками тата Хв. Уяр литература ĕçĕнче психологизм енне туртăннипе уйрăлса тăраççĕ. Вĕсем геройăн чун тарăнăшне, ăшра пулса иртекен пăлханăва тĕплĕн сăнласа кăтартма, алса тулне тавăрса кăтартнă пек вулакана уçса пама ăста. Кунсăр пуçне, икĕ çыравçă та çул çӳреме кăмăллани курăнать. Хв. Уяр Иçет Хĕвел Тухăçне, Индине, Вăтаçĕр Азине çитсе курать, çул çӳрев дневникĕсем çырса хăварать. Х. Муракамин çул çӳревĕ Европа, Америка тăрăхĕсемпе çыхăннă. Унăн чылай хайлавĕнчи геройсем тĕрлĕ çĕр-шыва çитсе кураççĕ. Тепĕр тӳр килӳ шутне икĕ халăх çыравçи те хайлавĕсене ярăма пĕрлештерес туртăмлă пулнине кĕртмелле. Хв. Уярăн «Таната» хайлавĕ икĕ кĕнекерен тăрать, Х. Муракамин «Хроника заводной птицы», «Кафка на пляже» романĕсем трилоги шутланаççĕ.

Х. Муракамин «Кафка на пляже» романĕ виçĕ кĕнекерен тăрать: «Кушаксем», «Чул», «Çĕнĕ тĕнче». Романта çамрăк çыннăн чун пыравне, вăл пурнăçра хăйĕн вырăнне тата пĕлтерĕшне тупма пултарнине сăнланă. Хв. Уярăн «Ăçта эс, тинĕс?» повеçĕнчи ĕç-пуç пĕр хайлава вырнаçать. Кунта Пĕтĕр пурнăçри хăй вырăнне шыранине Тайгари çул-çӳрев урлă кăтартса панă.

Чăн малтанах хайлавсенчи геройсем çулĕпе çамрăк пулнине палăртмала: Петĕр – 12-13 çулта, Тамура – 14-15 çулта. Геройсем хăйсен çулне хайлав тăршĕнче темиçе хутчен те аса илеççĕ, анчах та вĕсен шухăшлавĕ, ăшри

монологĕсем, вĕсем пурнăçлакан ĕçсем героя аслăрах та кăтартаççĕ: пĕччен инçе çула тухса кайни, пурнăç пĕлтерĕшĕ, çынсем хушшинчи хутшăнусем пирки шутлани, ар хутшăнăвне кĕни.

Икĕ хайлаври герой та пурнăçри хăйсен вырăнне шыраççĕ. Тăван килте пăтăрмах сиксе тухнишĕн вĕсем хăйсене айăплă тесе шутлаççĕ. Петĕр пиччĕшне Çĕнĕре илĕртсе кăларса янишĕн, ашшĕсемпе пĕр чĕлхе тупайманнишĕн ÿкĕнет, çавăнпа та çак пăтăрмаха татса парас вырăнне килтен тухса тарать. Инçет Хĕвел Тухăçне çитет. Тамура та Петĕр пекех, çурма тăлăх ÿснĕ. Вăл хăйне ашшĕне вĕлернĕ, амăшне намăс кăтартнă тесе шутлать. Пурнăçа усăмлăх кĕртес вырăнне урăх хулана тарса каять, никам пĕлмен библиотекăра ĕçлесе пурăнать.

Çĕнĕ вырăнĕ ик хайлавра та çут ĕçĕпе, кĕнекепе çыхăннă. Кунта геройсем хăйсене валли юлташ тупаççĕ. Петĕр Амиканпа веттехникумра паллашать. Тамура юлташĕ Осима библиотекăра пулăшакан пулса ĕçлет. Г. Федоров палăртнă тăрăх, Хв. Уярăн «Ăçта эс, тинĕс?» хайлавĕнче «европеец» тата «азиат» çыннин тĕнчекурăмне, шухăшлавне танлаштарасси мала тухать. Аслă вăрман умĕнче Петĕрĕн пĕлÿпе мухтанни ниме юрăхсăр пулса тăрать. Хисеплĕ профессорăн шухăшне аталантарса эпир çак «азиат» çынни Петĕре хăйне тупма пулăшакан çул çине тăратаканĕ пулнине палăртасшăн. Амиканăн Петĕр шăпинчи миссийĕ – ăна вăрмана çул кăтартса ярасси. «Ăçта эс, тинĕс?» повеçтьре çак çул юхан шыв тăрăх, кайран вăрман витĕр выртать. Çул çинче пур чух та Амикан малта ертсе пырать, вăл Петĕре кирлĕ вырăна çитерсе ярать. Х. Мураками хайлавĕнче Осима Тамурăна кирлĕ-кирлĕ мар ĕç-пуçсене хутшăнасран сыхласа ту çинче, вăрман варринче ларакан çурта асфальт çулпа ăсатса хăварать. Кирлĕ вырăнна çитсен геройсен ăшри шыравĕ, хумхантаракан ыйтусене татса парасси, чун тĕпĕнче чакаланасси пуçланать. Геройсен шырав çулĕ çинче юлташ тупăнни пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Калура вĕсен пĕлтерĕшĕ – тĕп сăнара кирлĕ вырăна çитерсе ярассипе çыхăннă. Амикан та, Осима та юлташĕсен шухăшне, кулянăвне ăнланаççĕ, анчах та вĕсене хумхантаранкан ыйтусене татса

пама пултараймаççĕ. Вĕсем герой улшăнăвне хатĕрлекенсем, курса тăракансем.

Геройăн чун шыравĕ вăрман варринче, ту çинче пулса иртни ăнсăрт пулăм мар. Сĕм авал тухăç халăхĕсен ту çине хăпарса чуна уçса турăсемпе калаçас йăла пулнă. Çак калаçу хыççăн пурнăç йĕркене кĕресси иккеленӳсĕр. Тĕп ĕненĕвĕне килĕшӳллĕн яштун çынни йывăççене те чĕрĕ пек курать. Вĕсем çынна итлеме, тепĕр сумлă ăсчахран та тĕрĕсрех, кирлĕрех хурав пама пултараççĕ. Çак йăлана чăвашсен киремет картисем ту сĕвекки, юман вăрманĕнче вырнаçни тӳр килсе тăрать. Асăннă пĕрлĕхре «Ама ту», «Ама йывăç» ăнлавсем палăрса тăраççĕ. Вĕсем таса, турăпа калаçмалли вырăнпа тӳр килеççĕ.

Çыравçăсем пĕр енчен илсен, хăйсен геройĕсене «авантюрăлла» ситуацисене вырнаçтараççĕ: чăтлăх тата аташтаракан вăрман, чуллă сăртсем... Тепĕр енчен герой тăвакан ĕçсем авалхи йăлана пурнăçланине тӳр килеççĕ: вăл юхан шыв урлă каçать, вăрман витĕр ту патне çитет, ту çине хăпарса турăсемпе калаçать, чунне уçать. Çакăн хыççăн унăн пурнăçĕ йĕркене кĕрет. Вăл хăйĕн пĕлтерĕшне ăнланса илет, пурнăçри вырăнне тупать. Кирлĕ йышăну тăвать. Халиччен хăйне хумхантарнă ыйту çине хуравлать. Ăнсăртран мар М. Федоровăн та Хĕветĕрĕ шăп та лăп çĕрлехи вăрманта çӳренĕ чухне «арçури» ăçтан пулнине, тĕрĕсрех каласан, чухăн хресченĕн хуйхи мĕнрен пулнине ăнланса илет.

Çыравçăсем герой вăрманта çӳренĕ вăхăта тĕрлĕрен сăнласа кăтартаççĕ. Хв. Уяр Петĕр монологĕсене илсе кăтартать. Вăл пĕррe Амикана тарăхни, тепре хăйĕн тыткаларăшне сивлени малтанах çиеле тухать пулсан, кирлĕ самант çитсен Петĕр ялĕнче пулса иртнĕ пăтăрмахсене аса илет, хăйĕн айăпне йышăнать. Петĕрĕн хăтланкаларăшĕсене калуçă куçĕпе сăнлани те пур. Калуçă, Г. Федоров калашле, ӳпран тăрăхлани, ятарласа йывăр ситуацисене лартни сисĕнет: пушмак çĕтĕлни, ăсансене тытайманни, йывăç çине сывăрма вырнаççан унтан ӳкни... Ӳт-пӳ сурапĕсене чăтни, çулри йывăрлăхсене унтан та ытларах шалти сюрĕклĕхе, кахаллăха çĕнтерни геройăн чунне тасатать. Йывăç çине сывăрма вырнаçнă Петĕр

хайĕн характерĕнче усал ейсем мĕншĕн çуралма пуçланине тишкерет, хайĕн айăпне йышăнать. Вăрманти пăтăрмахсене çĕнтерни ăна çав усалтан, «европеизмран», тепĕр çынран çӳлерех пулма пултарнине ĕненнинчен хăпма, тасалма пулăшать. Петĕр шурлăх тăрăх çĕтсе çӳрет, чулпă сăрт çине упаленсе хăпарать... Çут çанталăк ӳкерчĕкĕ кунта унăн çирĕплĕхне тĕрĕслемелли услови çеç мар, чун тĕпĕнчи улшăнусене сăнарлани те.

Х. Муракамин романĕнчи Тамурăпа çыхăннă ĕçсене пĕрремĕш сăпатран йĕркеленĕ. Геройпа пулса иртекен событисем чăнлăхпа тӳр киллсеннисем тата шухăшлав шайĕнчисем çине пайланаççĕ. Вăл иккĕшне те чăнлăх пек йышăнать. Ватă хĕрарăм 15 çулхи хĕр пек курăнни, тахçан хĕрĕхмĕш çулсенче çухалнă салтаксем çул кăтартса яни, ятсăр ялсем... – çаксем пĕтĕмпех шухăш шайĕнче. Хайлавра герой куракан тĕлĕксене пĕрре мар илсе панă. Вĕсем те сисĕмлĕ, туйăмлă, чăн пурнăçра пулнă пек. Романта геройăн ĕçĕсене мар, шухăшĕ улшăннине, чунĕ тĕпĕнчи шырава кăтратма кирлĕ çакă. Кăмăлĕпе çирĕп пулни, хăйне ĕненни, тĕрĕслĕхе шырани ăна чăнлăхра тăрса юлма май парать. Герой чунĕ тĕпĕнче чакаланса пулма пултарнă усала çĕнтерет. Çăмăлтайла пурăнакан çамрăка пурнăç ырлăхĕсем илĕртнĕ. Этем нисĕппе çухатас теменни ăна чунĕнчи усалĕсене çĕнтерме, пурнăçри тасамарлăха хирĕç тăма пулăшать те.

Япун романĕнче çыннăн чунĕ мĕн таран кăткăс пулма пултарнине авалхи Месопотамири лабиринтсемпе танлаштарса кăтартнă: «... жители Месопотамии вынимали кишки у животных, – а иногда, возможно, и у людей – и по их формам предсказывали судьбу. Чем запутаннее были кишки, тем ими восхищались. Поэтому переплетенные ходы лабиринта напоминают кишечник. Иначе говоря, принцип лабиринта лежит внутри тебя. Это внутренняя сторона человека, которая соотносится с хитросплетениями того, что лежит на поверхности» [1, с. 101].

Икĕ хайлаври герой та килти, çемьери çынсемпе хирĕçӳре. Çакна пула вĕсене пĕтĕм этемлĕхпе те хирĕçӳре пулнă пек туйăнать. Çывăх çынсăр, юлташсăр пурăнма çуккине, вĕсене хисеплеме кирлине вĕсем вăрман

варринчи ту çине хăпарсан ăнланса илеççĕ. «Петĕр хăй пĕччен юлма ĕмĕтленнине аса илет. Акă пĕччен вăл. Кирек мĕн ту ĕнтĕ. Ни вăрçакан, ни вĕрентекен çук. Эй, ухмах, ухмах та çав. Мĕн тăвайăн пĕччен? Ним те тăваймастăн. Вилмс пулать пĕччен. Пурăнас, пурнăç тăвас тесен йышпа кирлĕ. Юлташ. Халăх. Ан тив, ятлакан ятлаçтăр, вĕрентекен вĕренттĕр... Анчах пăрахса ан хăвар, çынсенчен ан уйăр» [2, с. 157].

Сăнарăн улшăнăвне сăнлас ĕçре çыравçăсем пĕр евĕр меласене усă курнине асăрхама пулать. Хайлавсенче вак детальсене сăнлани пĕлтерĕшлĕ: Тайгари вăрмана, пурăнмалли пӳлĕмс, сăнарăн портретне, мĕн çинине... Тепĕр чухне сăнлав натурализм е физиологи çине те куçса каять. Çакă пĕтĕмпех геройăн чун улшăнăвне тĕплĕн сăнласа пама пулăшать.

Х. Муракамин тата Хв. Уярăн хайлавĕсенче çыравçăн биографи палалисене асăрхама пулать. Хв. Уяр нуша хăвалантипе çамрăк чух Хĕвел тухăçĕнче пурăннă, вĕреннĕ. Пĕрре мар Тайга тăрăх çӳренĕ. Повестьри Петĕр кăмăл еккипе çула тухать. Х. Муракамин геройĕ те хăйĕн пекех çул çӳреме, кĕнекс вулама, музыка итлеме юрататъ.

Икĕ хайлаври тĕп сăнар та ахаль çын пулнине палăртмалла. Вĕсем общестово, çывăх çынсен чунсăрлăхне пула шар кураççĕ. Вĕсен чунĕсенче пулса иртекен пăтăрмах ачалăхпа çыхăннă. Тамура пĕчĕк чухне амăшĕ пăрахса кайнишĕн чунĕпе сусăрланса юлнă. Тăлăх Петĕре тăванĕсем çын вырăнне хумаççĕ, ытлашши çăвар тесе ӳпкелеççĕ. Вăл пĕтĕм хавалĕпе хăй те пĕлтерĕшлĕ иккенне ĕнентересшĕн.

Çапла вара, Хв. Уярăн «Ăçта эс, тинĕс?» повеçĕнчи тата Х. Муракамин «Кафка на пляже. Новый мир» романĕнчи пĕрпеклĕхсем психологизм мелĕсене тĕпс хурса ĕçлениничен килеççĕ тесе пĕтемлетӳ тума пулать. Çак мел çут çанталăк сăнарне тĕпе хума ыйтать. Вăл геройăн чун шыравне туллин кăтартса пама май парать.

*Литература*

1. Мураками, Х. Кафка на пляже: Новый мир: Роман / Х. Мураками. – М.: Эксмо, 2006. – 320 с.

2. Уяр, Хв. Ăçта эс, тинĕс?: Повесть, калавсем, тĕрленчĕксем / Хв. Уйяр. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2007. – 255 с.